28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮЛЬ
17
ЫТЛАРИКУН
136(6887) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна палăртаççĕ: Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, колхоз хресченĕсем тăрăшнипе пула, Хĕрлĕ Çар апат-çимĕç çитменнипе курмарĕ. Колхозсемпе совхозсем—рабочисемпе интеллигенцие апат-çимĕç, промышленноçа—чĕртавар парса тăчĕç, фронт валли хĕçпăшалсемпе снаряжени туса кăларакан заводсемпе фабрикăсене йĕркеллĕн ĕçлесе пыма пулăшрĕç. Колхоз хресченĕсем, Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен тивĕçлĕхне вĕçне çитиччен ăнланса илсе, тăшмана çĕнтерес ĕçре Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшса тăчĕç.

1945 çулхи çуракине пĕлтĕрхинчен чылай кал-калăнрах та кĕскерех срокСенче тата лайăхрах пахалăхпа туса ирттернĕ. Государствăн çурхи тырăсем акмалли планне колхозсемпе хресчен хуçалăхĕсем 100,1 процент, тĕштырă культурисем енĕпе 102,8 процент, çĕрмамăк енĕпе 100 процент, сахăр кăшманĕ енĕпе 101,0 процент чухлĕ тултарнă.

Çуракине ăнăçлăн ирттерни тата çурхи уйхир ĕçĕсене лайăхрах пахалăхпа туса ирттерни кăçалхи çул пур çĕрте те вăйлă тырпул туса илме, пухса илекен тĕштырăн, çĕрмамăкĕн, йĕтĕнĕн, çу тумалли культурăсен, сахăр кăшманĕн, çĕрулмин, пахча-çимĕçсен пĕтĕм хисепне чылай ӳстерме, государствăн ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли планне вăхăтра та пĕтĕмĕшпех тултарма, колхозсемпе совхозсенче, хресчен хуçалăхĕсенче вăрлăх фончĕсене хывса хăварма тата колхозсемпе колхозниксен, хресчен хуçалăхĕсен тупăшĕсене ӳстерме май парать.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ мĕнпур партипе совет, çĕрĕçпе хатĕрлев организацийĕсене, колхозсене, МТС-сене, совхозсене, промышленность предприятийĕсем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсене тата хресчен хуçалăхĕсене çакна асра тытма хушаççĕ: тырпула вăхăтра тăккаламасăр пухса кĕни, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плансене закона пăхнă срокСенче тултарни вăрçă кӳнĕ сиенсене хăвăртрах пĕтерес тата хамăр çĕршыври халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене чи кĕске срокСенче юсаса ура çине тăратас тĕлĕшпе кăçалхи çул пĕтĕм халăх пурнăçĕшĕн чи паха вырăн йышăнса тăраççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ советпа парти, çĕрĕçпе хатĕрлев органĕсене тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçре пĕлтĕр пулнă çитменлĕхсене тепĕр хут тумалла марри çинчен асăрхаттараççĕ. Çав çитменлĕхсем çакăнта пулнă: чылай облаçсенчи, крайсемпе республикăсенчи МТС-семпе колхозсем тата совхозсем тракторсене, тырă вырса пухмалли машинăсене, молотилкăсене ĕçе хатĕрлессине кая хăварнă, вĕсемпе тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте туллин усă курман, тырпул пухса кĕртессипе авăн çапассине черетлĕн туса пынă, çав сиенлĕ черетлĕхе пула вара авăн çапассипе ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси вăраха юлнă, тырпула чылай тăккаласа пĕтернĕ, уйрăм колхозсемпе совхозсенче вара государствăн ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли планĕсене тултармасăр хăварнă. Хăшпĕр облаçсемпе крайсенче, республикăсенче колхозсемпе совхозсенчен тырă йышăнас тĕлĕшпе Наркомзагăн хатĕрлев пункчĕсен ĕçне çителĕксĕр организацилене: пунктсем валли кадрсем çителĕклĕ таран тупса паман, тырă пама пынă çынсене пунктсенче нумай вăхăт тытатыта тăнă, çуртйĕрсене тырпул йышăнма кирлĕ пек хатĕрлесе çитермен, тырпула пăсăласран тата çаратса пĕтересрен сыхлассине йĕркелемен, тĕштырра складсене тĕрĕс мар хывса пынă.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ советпа парти, çĕрĕçпе хатĕрлев органĕсем умне, СССР Наркомземĕ, СССР Наркомсовхозĕ, Наркомзаг, СССР Наркомпищепромĕ, СССР Наркоммясомолпромĕ, Центросоюз, мĕнпур колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем умне çакăн пек задача лартать: тырпула кĕске срокСенче, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес тата 1945 çулхи тырпултан ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана кашни культура енĕпе вăхăтра тултарас тесе, колхозсемпе МТС-сен, совхозсен мĕнпур вăйсемпе майсене мобилизацилемелле.

Колхозсемпе МТС-сене тата совхозсене юсав бригадисем, квалификациллĕ рабочисем ярса, автотранспорт, лашасем, урапасем, тырă турттармалли хатĕрсем, оборудованисем, запаслă пайсемпе материалсем, инструментсем уйăрса парса, промышленность предприятийĕсемпе хуçалăхлари организацисем тата учрежденисем енчен колхозсемпе МТС-сене, совхозсене тырпул пухса кĕртсе тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас ĕçре пур майпа та пулăшассине организацилемелле.

СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ промышленность наркоматĕсене тракторсем, ялхуçалăх машинисем, вĕсем валли запаслă пайсем, удобренисемпе химикатсем туса кăларас тĕлĕшпе çирĕплетсе панă плансене, çавăн пекех ялхуçалăхĕ валли нефть продукчĕсем тата тырпулсене пăхса çитĕнтерме, вĕсене пухса кĕртме тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлеме кирлĕ ытти тĕрлĕ материаллă-техникăллă средствăсем парса тăмалли тата турттармалли плансене пĕр çăмахсăрах пурнăçа кĕртсе пыма хушаççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ СССР Наркомземне, СССР Наркомсовхозне, СССР Наркомпищепромне, СССР Наркоммясомолпромне, Наркомзага, Центросоюза, подсобнăй хуçалăхсем тытса тăракан мĕнпур наркоматсене, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, парти крайкомĕсемпе обкомĕсене тата райкомĕсене, райисполкомсене, ял Совечĕсемпе колхозсен председателĕсене çапла тума хушаççĕ:

I
ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТМЕ ТАТА ГОСУДАРСТВĂНА ЯЛХУÇАЛĂХ ПРОДУКЧĔСЕМ ПАМА ХАТĔРЛЕНЕС ЕНĔПЕ

1. Тырпул пухса кĕртес ĕç пуçланиччен мĕнпур комбайнсене, жнейкăсене, лобогрейкăсене, тракторсене, молотилкăсене, лашапа ĕçлемелли приводсене, локомобильсене, автомашинăсене тата тырпул вырса пухмалли ытти инвентарьпе транспорт инвентарьне юсаса хатĕрлес шутпа, тырă вырса пухмалли мĕнпур машинăсене юсас ĕçе вăйлатас тата вĕсене ĕçе хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе халех мерăсем йышăнмалла, машинăсене юсас ĕçе ялă вырансенчи тата хуласенчи предприятисене, мастерскойсемпе тимĕрçĕ лаççисене явăçтармалла. Юсанă комбайнсем çумне комбайн ĕçленĕ чухнех çапнă тырра пушатмалли, тĕштырă тăккаласран сыхланмалли, çапнă улăма купалаçа хăвармалли тата ӳкнĕ тырпула вырса пухмалли хатĕрсем туса лартмалла, моторсемпе хедерсем çук пирки тырă вырса пухнă çĕрте усă курма май килмен комбайнсене юсаса, авăн çапнă çĕрте усă курмалла тăвас пулать.

2. Комбайнсемпе молотилкăсене тата тырă вырса пухмалли ытти машинăсене мĕнле юсаса хатĕрленине государство комиссийĕсен тĕрĕслесе тухмалла, начар юсанă машинăсене йышăнмалла мар. Юсанă комбайнсемпе молотилкăсене, ĕçре тĕрĕслесе пăхманскерсене тата государство комиссийĕсем йышăнманскерене, сводкăсене кĕртме МТС-семпе совхозсен директорĕсене чарас.

3. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене тракторсемпе комбайнсем, молотилкăсем тата тырă вырмалли ытти машинăсем валли запаслă пайсем туса кăларас тĕлĕшпе панă заданисене кашни предприяти тăрăх пĕр çăмахсăрах пурнăçламалла тума хушас, тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли уйрăм узелсем юсаса хатĕрлес, комбайнсене вир, хура-[illegible], хĕвелçаврăнăш тата вăрлăхлăх акнă курăксем вырса пуçтармалла туса йĕркелес, çавăн пекех трактор бригадисемпе колхозсенчи уйхир бригадисем валли кирлĕ инструментсем туса хатĕрлес тĕлĕшпе МТС-семпе совхозсене тата колхозсене пулăшу парассине организацилеме хушас.

4. Тырă вырмалли çăмăл машинăсене юсас ĕçре, çавăн пекех трактор бригадисемпе комбайн агрегачĕсене пулăшас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăракан колхоз тимĕрçисен ĕçне йĕркелесе ямалла; облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, райисполкомсемпе парти райкомĕсене çав ĕçре колхозсене пур тĕлĕшрен те, уйрăмăн илсен, тимĕрçĕ лаççисем валли кăмрăк, тимĕр парса тăрас тата çителĕклĕ таран тимĕрçĕсем тупса уйăрас тĕлĕшрен, пулăшу пама хушас.

5. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, Наркомзага, СССР Наркомторгне, СССР Наркомпищепромне, СССР Наркомтекстильне, Центросоюза тырпулсем йышăнма тытăниччен элеваторсене, складсене, сушилкăсене, хранилищĕсене, шăналăк-михĕсене, виçесемпе тарасасене пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитерме хушас; тырпулпа çĕрулмине, пахча-çимĕçсемпе техникăллă культурăсене талăк тăршшĕпех йышăнмалла тума тата, тырпул паракансемпе вăхăтра расчет тăвас шутпа, хатĕрлев пункчĕсене кирлĕ инвентарьпе тырпул йышăнмалли квитанцисен бланкĕсене çителĕклĕ тупса пама хушас. Шывçулĕсемпе чугун çулсенчен аякри вырăнта тăракан пунктсенчи складсене вăхăтра юсас тата çав пунктсенчи пĕлтĕрхи мĕнпур тĕштырра турттарса тухас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла.

Хатĕрлев пункчĕсем патне пымалли чугун çул юпписсене юсас, çавăн пекех çулсемпе кĕперсене йĕркене кĕртес ĕçе халех организацилемелле.

6. Колхозсемпе совхозсен государствăна тĕштырă тата çу тумалли культурăсем парас ĕçне çăмăллатас шутпа, тырпул хатĕрлес ĕç пуçланиччен Наркомзага чугун çул станцийĕсенче, разъездсемпе пристаньсенче Заготзерно хатĕрлев пункчĕсене уçма хушас. Çулйĕр Халăх Комиссариатне тата Юханшыв Флочĕн Халăх Комиссариатне станцисенчи, разъездсенчи тата пристаньсенчи пур пек складсене, вĕсенче хатĕрлев пункчĕсем организацилесе вăхăтлăха усă курмашкăн, кăçалхи июлĕн 25-мĕшĕ тĕлне Наркомзаг аллине пама хушас.

7. Çулйĕр Халăх Комиссариатне тырă турттарма витнĕ вагонсем тата тырă турттармалли щитсем кирлĕ таран хатĕрлесе çитерме хушас, çав вагонсемпе щитсене пуринчен малтан Украинăри, Çурçĕр Кавказри, Çĕпĕрти тата Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чугун çулсене памалла.

8. Наркомзагпа СССР Наркомсовхозне тырă хатĕрлевĕ пуçланнă тĕле Союззаготтранспа Совхозтрансăн грузовой автомашинисене юсаса ĕçе яма хушас. Союззаготтранспа Совхозтрансăн автомашинисене тĕштырă, çу тумалли культурăсем, çĕрмамăкĕпе сахăр кăшманĕ турттарас ĕçсемпе çыхăнман ытти ĕçсене яма чарас. Союззаготтранспа Совхозтрансăн инçетри пунктсенчен тырă, çу тумалли культурăсен вăрлăхĕсем, çĕрмамăкĕпе сахăр кăшманĕ турттарас ĕçре ĕçлемен автомашинисене пурне те чугун çулсемпе пристаньсенчен аякра вырнаçса тăракан совхозсемпе колхозсенчен тырă турттарма ямалла тăвас.

9. Тырă вырас ĕç пуçланиччен кашни район, МТС, колхоз, совхоз тырпул пухса кĕртме тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлеме мĕнле хатĕрленсе çитнине государство енчен тĕрĕслесе тухмалла, çак ĕçе туса ирттерме республика совнаркомĕсен, крайисполкомсен, облисполкомсен, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсен, парти крайкомĕсемпе обкомĕсен, райисполкомсемпе парти райкомĕсен ертсе пыракан работникĕсене уйăрмалла.

Колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем тăрăх тĕрĕслесе тухнин результачĕсене райисполкомсенче тата парти райкомĕсенче, районсем тăрăх тĕрĕслесе тухнин результачĕсене вара — облисполкомсенче, крайисполкомсенче, республика совнаркомĕсенче, парти обкомĕсемпе крайкомĕсенче, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсенче пăхса тухмалла, тырпул пухса кĕртме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрленес ĕçре палăрнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

10. Тырă вырас ĕç пуçланиччен 10 кун малтан кашни колхозра, совхозра, МТС-ра, кашни трактор бригадинче тата уйхир бригадинче тырпул пухса кĕртмелли, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли тата тырпул пухса кĕртес ĕçпе пĕр вăхăтра килекен ытти ĕçсене туса ирттермелли плансене туса хумалла. Çав плансенче çаксене палăртса хурас пулать:

а) мĕнпур колхозниксемпе совхозсенчи рабочисен йышне тырпул пухса кĕртес ĕçе туллин хутшăнтарассине, хуçалăхри шалти ĕçсенче тата подсобнăй хуçалăхсенче ĕçлекен колхозниксене çав ĕçсенчен май килнĕ таран ытларах пушатса, вĕсене тырă вырнă çĕрте тата тырă турттарнă çĕрте ĕçлеттерессине, тракторсемпе, ĕç выльăхĕсемпе, комбайнсемпе тата тырă вырмалли ытти мĕнпур машинăсемпе, инвентарьсемпе, транспорт хатĕрĕпе туллин усă курассине;

б) государствăна пама тырă тата ытти тĕрлĕ çимĕçсем турттарас тĕлĕшпе ятарласа транспорт бригадисем организацилессине;

в) тырпул вырса пуçтарас, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем турттарса парас ĕçсемпе пĕрле килекен ытти мĕнпур уйхир ĕçĕсене, çăмахран илсен, кая юлса пулакан культурăсене пăхса çитĕнтерес, таса çĕртме пуссине пăхса тăрас, кĕрхи тырăсем акас, кивĕ хăмăла тăпăлтарса кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсене вăхăтра ирттерессине;

г) тырпул пухса кĕртме, государство валли тырăпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем турттарма колхозсемпе совхозсенче туртăм вăйне тата транспорт хатĕрĕсене хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнассине, лашасемпе, ĕç вăкăрĕсемпе хуçалăхри шалти ĕçсенче усă курассине май килнĕ таран ытларах чакарассине палăртса хумалла.

11. Тырпулсене пухса кĕртнĕ вăхăтра комбайнсемпе тракторсене пĕр чăрăнмасăр ĕçлеттермелле тăвас тесе, кашни МТС-па совхозрах кашни 10 комбайн агрегачĕ валли куçса çӳрекен пĕрер автомастерской е тата кашни 5 комбайн агрегачĕ валли лашапа турттарса çӳрекен пĕрер мастерской туса хатĕрлемелле. Куçса çӳрекен мастерскойсем валли ремонт тăвакан рабочисен лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ кадрĕсене тупса памалла, кашни комбайн агрегачĕ валли инструментсем тата комбайнсене хиртех техника тĕлĕшĕнчен пăхса тухса юсама кирлĕ уйрăмах пĕтекен запаслă пайсем, çавăн пекех тата горючипе çу ямалли инвентарь, пушартан сыхланмалли хатĕрсем тупса памалла. Тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлекен трактор бригадисем валли хирте стансем туса памалла.

12. МТС-семпе совхозсене, колхозсене машинăсем юсас тата тырпул пухса кĕртес ĕçсенче пулăшма вырăнти тата союзлă промышленноçăн предприятийĕсенчен, ремесла училищисемпе ФЗО шкулĕсенчен халиччен комбайнерсем пулса ĕçленĕ çынсене пурне те тата квалификациллĕ рабочисен, инженерла-техникла работниксен бригадисене ямалла.

13. Колхозсемпе совхозсенче тĕштырра вăхăтлăха хурса усрама—витнĕ итемсемпе лупасайсем, яланлăха хурса усрама—амбарсем кирлĕ таран хатĕрлесе хумалла. Çурçĕртри тата центрти районсенче, çавăн пекех Çĕпĕрпе Урал тата Хĕвелтухăç районĕсенче, тырпул пухса кĕртнĕ тапхăрта çанталăк нумай вăхăт хушши йĕпе-сапаллă тăнипе тĕштырă пăсăлас хăрушлăх пур çĕрте, кашни колхозпа совхозрах кăçалхи августăн 1-мĕшĕччен çăмăл майпа тырă типĕтмелли сушилкăсем тумалла тата пур пек сушилкăсене юсамалла, çавăн пекех хутса ăшăтакан çуртйĕрсене, авăнсемпе ӳплесене тырă типĕтмелле туса йĕркелемелле. Мĕнле йышши сушилкăсем тумаллине палăртас ĕçре колхозсене пулăшу памалла, çавăн пекех сушилкăсем тума строительство материалĕсем, оборудованисем парса пулăшмалла. Промкоопераципе вырăнти промышленность предприятийĕсенче сушилкăсен стандартлă деталĕсене туса кăларассине организацилемелле, колхозсен çав детальсене илсе хăйсем хатĕрленĕ çуртйĕрсенче вырнаçтармалла.

14. Вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промысла артелĕсенче урапасем, кустăрмасем, ут таврашĕсем (хăмăтсемпе ĕнерчĕксем, постромкăсемпе вĕренсем), çавăн пекех тата урапа сĕрмелли маçсем туса кăларассине организацилемелле.

15. Тырпул пухса кĕртессине ăнăçлăн туса ирттерес ĕçре тракторсемпе комбайнсем валли горючипе сĕрмелли çусем çителĕклĕ хатĕрлесе хуни питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснаба, Çулйĕр Халăх Комиссариатне, Юханшыв Флочĕн Халăх Комиссариачĕпе Тинĕс Флочĕн Халăх Комиссариатне горючи тултармалли вырăнсене тата юханшыв хĕррисенчи нефтебазăсене горючипе сĕрмелли çусене вăхăтра пухса хума, перевалкăсем патне пушă цистернăсем çителĕклĕ таран илсе пыма, нефть продукчĕсене ялхуçалăхĕ валли вăхăтра тиесе ăсатма, МТС-семпе совхозсене, Союззаготтранспа Совхозтрансăн автоотрячĕсене тырпул пухса кĕртес тата тырă хатĕрлес вăхăт валли горючипе сĕрмелли çусем татти-сыпписĕр парса тăма хушас.

16. Облисполкомсене, крайисполкомсене, автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсене—кашни район тăрăх, союзлă республикăсен совнаркомĕсене вара—кашни область тăрăх МТС-семпе совхозсене, подсобнăй хуçалăхсене, Союззаготтранспа Совхозтрансăн автоотрячĕсене тырпул пухса кĕртес ĕç вăхăчĕ валли горючипе сĕрмелли çусем мĕн чухлĕ кирлĕ пулассине палăртса хума, тырпул пухса кĕртес ĕç валли турттарса пыракан нефть продукчĕсене нефтебазăсем тăрăх мĕн таран тĕрĕс валеçнине çирĕп контроллесе тăма хушас, çак ĕçе ертсе пырассине облисполкомăн, крайисполкомăн, республика совнаркомĕн председателĕн заместителĕсенчен пĕрин çине хумалла.

Инçетре ларакан МТС-сем валли, çавăн пекех тата мĕнпур совхозсем валли горючи чи малтан турттарса хумалла тăвас.

17. Чугун çулсен начальникĕсене тата СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснабăн управленине ялхуçалăхĕ валли нефть продукчĕсем ăсатма уйăрнă маршрутсене уйрăм пунктсенче тата çав маршрутсем каяс çулсем çинче маршрутсене салатма чарас.

Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен совнаркомĕсене çав асăннă маршрутсене вăхăтра организацилессине тата вĕсене хăвăртрах çӳретессине, вĕсем çулсем тăрăх мĕнле куçса пынине, нефть продукчĕсене нефтебазăсенче вăхăтра пушатассине, пушатнă хыççăн цистернăсене каллех маршрута пухассине тата вĕсене нефть продукчĕсем тултаракан вырăна çийĕнчех каялла çитерессине çирĕп контроллесе тăма хушас.

18. Ялхуçалăхĕ валли уйăрнă нефть продукчĕсене шыв çулĕпе, çавăн пекех чугун çулсемпе те кăçалхи III-мĕш кварталта ытти потребительсем валли тиесе ăсатиччен пуринчен малтан тиесе ăсатмалла.

19. Çапла йĕрке тăвас: тырпул пухса кĕртес ĕçе туса ирттерме тата инçетри пунктсенчен тырă турттарма 1945 çулхи июнь, июль, август тата сентябрь уйăхĕсем валли уйăрнă горючи лимичĕсем 1945 çулхи III-мĕш квартал тăршшĕпех вăйра тăраççĕ.

МТС-семпе совхозсене тата промышленность наркомачĕсен подсобнăй хуçалăхĕсене, Союззаготтранса, Главнефтеснабăн базисенче ресурссем пулсассăн, кăçалхи август уйăхĕнче горючипе сĕрмелли çусем килес уйăхри лимит шучĕпе илме ирĕк парас.

(Малалли 2-мĕш страницăра).

Китай республикин Ĕç тăвакан Юань Председателĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Сун Цзы-вень господин Мускавра пулни çинчен Совет Союзĕпе Китай пĕлтерни

Юлашки кунсенче Мускавра СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Китай республикин Ĕç тăвакан Юань Председателĕпе тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕпе Сун Цзы-вень господинпа калаçнă. Совет Союзĕ енчен калаçусене çаксем хутшăннă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовский тата Совет Союзĕн Китайри Посолĕ А. А. Петров. Китай енчен калаçусене çаксем хутшăннă: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Вице-министрĕ Ху Ши-цзэ господин, Китай республикин Совет Союзĕнчи Посолĕ Фу Бин-чан господин тата Цзян Цзин-го господин.

Калаçусен тĕллевĕ Совет Союзĕпе Китай хушшинчи ĕçсене лайăхлатасси пулнă, çавăнпа та икĕ енĕ те интересленекен питĕ паха ыйтусем çинчен калаçнă. Калаçусем туслăн пулса иртнĕ, пĕр-пĕрне лайăх ăнланса пыни палăрнă.

И. В. Сталинпа В. М. Молотов виçĕ держава руководителĕсен канашлăвне тухса кайнă май, калаçусем чарăннă. Сун Цзы-вень господин кĕске вăхăтлăха Чунцин хулине тухса кайнă. Калаçусем çывăх вăхăтра çĕнĕрен пуçланса каймалла.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче Китай республикин Ĕç тăвакан Юань Председателĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Сун Цзы-вень господин ячĕпе пулса иртнĕ апатлану

Июлĕн 13-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче Кремльте Китай республикин Ĕç тăвакан Юань Председателĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Сун Цзы-вень господин ячĕпе апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: Китай республикин Ĕç тăвакан Юань Председателĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Сун Цзы-вень господин, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Вице-министрĕ Ху Ши-цзэ господин, Китайăн Совет Союзĕнчи Посолĕ Фу Бин-чан господин, Шень Хун-ле, Цянь Чан-чжао, Цзян Цзин-го, Чжан Чу-юнь, Пу Дао-мин тата Лю Цзе-жун господинсем.

Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: В. М. Молотов, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, М. А. Вознесенский, Н. А. Булганин, А. Н. Косыгин, В. М. Меркулов, В. Г. Деканозов, Ф. А. Лозовский, Совет Союзĕн Китайри Посолĕ А. А. Петров тата СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем.

Апатлану ăшшăн та туслăн пулса иртнĕ.

Китай республикин Ĕç тăвакан Юань Председателĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Сун Цзы-вень господин Мускавран тухса кайни

Июлĕн 14-мĕшĕнче Китай республикин Ĕç тăвакан Юань Председателĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Сун Цзы-вень господин Шень Хун-ле, Цянь Чан-чжао, Цзян Цзин-го, Чжан Фу-юнь, Пу Дао-мин, Лю Цзе-жун господинсемпе тата ыттисемпе пĕрле Мускавран тухса кайнă.

Вĕсемпе пĕр вăхăтрах Мускавран Совет Союзĕн Китайри Посолĕ А. А. Петров тухса кайнă.

Центральный аэродромра вĕсене çаксем ăсатса янă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовский, Тулашри Суту-илӳ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Ю. М. Каганович, Мускав Совечĕн Председателĕн Заместителĕ М. А. Яснов, генерал-лейтенант К. Р. Синилов, СССР Наркоминделĕн 1-мĕш Инçетри Хĕвелтухăç отделĕн Заведующийĕ Г. И. Тункин, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕн Заместителĕ Г. И. Фомин. Çавăн пекех тата вĕсене çаксем ăсатса янă: Китайăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Вице-министрĕ Ху Ши-цзе господин, Китай Посолĕ Фу Бин-чан господин, Китай посольствин сотрудникĕсем, Франци республикин Посолĕ Ж. Катру генерал, Великобританин Ĕçри вăхăтлăх поверенныйĕ Ф. Робертс господин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Ĕçри вăхăтлăх поверенныйĕ Ж. Кеннон господин тата ыттисем те.

Аэродромра Китай тата Совет флагĕсене çакса илемлетнĕ.

Берлинран илсе килнĕ трофейсем

Трофейсен выставкипе çĕнĕ экспонатсем—нимĕçсенчен кăçал тытса илнĕ трофейсем çитнĕ.

Выставкăн авиаци пайĕнче Берлин районĕнчен илсе килнĕ икĕ моторлă «Мессершмитт—410» истребителе курма пулать. Вăл истребителĕн 1.750 лаша вăйлĕ икĕ мотор, 50 миллиметрлă тупă пур. Вăрçăн юлашки тапхăрĕнче нимĕçсем хăйсен самолечĕсене пăртак улăштарнă. Çăмахран, «Фокке-Вульф—109» истребителĕн сывлăшпа сивĕтмелли мотор вырăнне шĕвекпе сивĕтмелли 1.900 лаша вăйлĕ мотор лартнă, çакна пула самолетăн вĕçмелли майсем ӳснĕ. Вăл самолет çинче 30 тата 80 миллиметрлă 4 тупă вырнаçтарса лартнă. Пĕр моторлă «Юнкерс—87» пикировщикăн çуначĕсем айне 37 миллиметрлă икĕ тупă лартнă. Малтан вăл йышши самолетăн 7,92 миллиметрлă икĕ пулемет кăна пулнă.

Хальхи вăхăтра Берлинран выставкăна çĕнĕ трофейсем килеççĕ, вĕсенчен нумайĕшĕ 1945 çулта туса кăларнă хĕçпăшалсем. Пуринчен ытла 32 кĕпçеллĕ 88 миллиметрлă миномет интереслентерет. Выставкăна пыракансем ку таранччен 10 кĕпçеллĕ миномет çеç курма пултарнă.

Тăшманăн Курляндири группировкине аркатса тăкнă вăхăтра французсен нимĕçсем аллинче пулнă пит пысăк тупине тытса илнĕ, ăна халĕ Мускава илсе килнĕ. Вăл 19 тонна таять, 21 километра çити перет. Тупă гусеницăсемпе çӳрет, унăн электромоторсем пур. Нимĕçсем ун çине çĕнĕ паллă çырса хунă, çав паллă çинче—«Мюнхаузен барон снаряд çине утланса ларнă».

Вена хулишĕн пынă çапăçусенче Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем венгерсен 210 миллиметрлă гаубицине, 120 миллиметрлă минометне тата ту артиллерийĕн тупписене тытса илнĕ. Çав трофейсем те халĕ выставкăра.

Выставкăна пыракансем нимĕçсен дотне—броньăллă калпака пысăк интереспа пăхаççĕ. Ун çинче халĕ та Украинăри 4-мĕш фронт боецĕсем: «Мускава, трофей выставкине», тесе çырнине вулама пулать. Ăна Одер районĕнче епле пулнă, çавăн пекех кăтартнă. Вăл 25 тонна таять, броня хулăмăшĕ 22 сантиметр, çӳллĕшĕ 2 метр та 14 сантиметр. Тăвата амбразурăран (пемелли шăтăкран) нимĕçсем йĕри-таврипех персе тăма пултарнă.

Германи техникинчи çĕнĕ япала—радиолокатор интереслентерет. Вăл самолетсене тупма тата вĕсен координачĕсене пĕлме пулăшать. Кунсăр пуçне, зениткăсенчен пемелли çĕнĕ приборсем, зенитнăй тупăсен юлашки тĕслĕхĕсем, çыранри оборонăн хăватлă тупписем тата танксене реактивлă минăсемпе перекен 88 миллиметрлă тупăсем интереслентереççĕ.

Павильонсенчен пĕринче фашистла Германин ялавĕсемпе орденĕсене пухнă. Витринăра кантăк айĕнче «импери канцелярийĕнчен илсе килнĕ» тесе çырнă табличка пур. Кунта ылттăн сасçаллисемпе «Адольф Гитлер» тесе çырнă служебнăй записка, нимĕç ăмăрткайăкĕн пумай орденĕсемпе медалĕсем пур.

Выставкăна кашни кунах темиçе пин çын пырса курать, СССР Верховный Совет депутачĕсем—Ленинград, Сталинград тата ытти чапа тухнă хуласенчи ертсе пыракан работниксем выставка кĕнеки çине выставка кăмăла кайни çинчен çырса хăварнă. Çырура вĕсем пирĕн хĕçпăшалăн никам çĕнтерейми хăватне, вăрçă вăхăтĕнче çав тери ӳссе кайнă совет полководецĕсен искусствине палăртаççĕ.

(ТАСС).

Лайăх ĕçлекен çыхăну органĕсем

ВЦСПС-па Çыхăну Халăх Комиссариачĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Канашри çыхăну узелне хăйсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пама йышăннă.

Пĕтĕм Союзри виççĕмĕш смотрта лайăх ĕçленĕшĕн Етĕрнери çыхăну конторин коллективне Çыхăну Халăх Комиссариачĕн грамотипе наградăланă.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче
1945 ҫулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуҫалăх продукчĕсем хатĕрлесси ҫинчен

Юлашки. Пуҫламăшĕ 1-мĕш страницăра.

20. СССР Совнаркомĕ ҫумĕнчи Главнефтеснаба, Нефтеснабăн вырăнти управленийĕсене, облаҫсемпе крайсенчи тата республикăсенчи советпа парти органĕсене тырпул пухса кĕртме, тырă турттарма тата тырă вырса пухас ĕҫпе пĕр вăхăтра килекен ытти тĕрлĕ ялхуҫалăх ĕҫĕсене туса ирттерме кӳрсе килнĕ нефть продукчĕсене урăх потребительсене пама чарас.

Тырпул пухса кĕртме тата тырă турттарма кӳрсе килнĕ горючипе ҫусене вырăнсăр расходласа тата салатса пĕтернĕшĕн айăплисене ответ тыттармалла тăвас.

II.

ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТМЕ ĔҪ ВĂЙĔ ПАРАССИ, ĔҪШĔН ТӲЛЕССИНЕ ОРГАНИЗАЦИЛЕССИ ТАТА ЯЛХУҪАЛĂХ ПРОДУКЧĔСЕНЕ ХАТĔРЛЕССИ ҪИНЧЕН

1. Тырă вырма тухиччен комбайнăн кашни агрегачĕ ҫумне лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ комбайнера, комбайнер помощникне тата тракториста уйăрса ҫирĕплетмелле. Ĕҫе тухиччен мĕнпур комбайнерсене пухса комбайнсене ĕҫлеттерес тата вĕсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрас ыйтусем тăрăх кĕске вăхăтлăх занятисем туса ирттермелле. Халĕ хăйсен специальноҫĕпе мар ĕҫлекен пур комбайнерсемпе комбайнер помощникĕсене те шута илсе, вĕсене тырпул пухса кĕртмелли вăхăта МТС-семпе совхозсене вăхăтлăха ĕҫлеме илес. Ҫакăн пек вăхăтлăха ĕҫе илнĕ комбайнерсемпе комбайнер помощникĕсене МТС-семпе совхозсем ҫумĕнче организациленĕ кĕске вăхăтлăх курссенче вĕрентсе кăлармалла.

2. МТС-семпе совхоз директорĕсене молотилкăсен, нефтьпе ĕҫлекен двигательсемпе локомобильсен машинисчĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе кĕске вăхăтлăх курссем ирттерме хушас; ҫав курссене кашни молотилкăпа двигатель валли икшер машинист вĕрентсе хатĕрлес шутпа туса ирттермелле.

3. Колхоз правленийĕсене, совхозсемпе МТС директорĕсене лашапа ĕҫлекен машинăсем ҫинче ĕҫлеме кирлĕ таран колхозниксемпе совхоз рабочийĕсене халех уйăрса пама хушас, ҫав колхозниксемпе рабочисене сноповязалкăсене, жнейкăсемпе лобогрейкăсене юсанă сĕре явăҫтармалла, вĕсене тырпул пухса кĕме пуҫличчен машинăсемпе ĕҫлеме пĕтĕмпех вĕрентсе ҫитермелле.

Ҫавапа ҫулакансене суйласа илесси тата вĕсен ĕҫне тĕрĕс организацилесси ҫине уйрăмах тимлĕн ҫаврăнса пăхмалла, вĕсем валли ҫава хайраса тӳрлетме кирлĕ инструментсем тупса памалла. Утă ҫулма начартарах пĕлекен ҫынсене пулăшас шутпа утă ҫулакансен кашни ушкăнĕ ҫумне опытлă колхозник уйăрса ҫирĕплетмелле.

4. МТС-семпе совхоз директорĕсене тата колхоз председателĕсене ҫакăн пек тума хушас:

а) тырă вырма тытăниччен кашни комбайн агрегатне, тырпул пухмалли лашапа ĕҫлекен кашни машинăна тата ҫава-ҫурлапа пухма уйăрнă кашни колхозникпа колхозницăна тырпул пухса кĕмелли участоксем ҫирĕплетсе памалла; тырă вырма пуҫличчен 5 кунран кая юлмасăр пур комбайнсемпе тракторсене те ĕҫ вырăнне ҫитерсе тăратмалла;

б) тырпул пухса кĕртмелли мĕнпур тапхăр валли кашни комбайн агрегачĕ ҫумне—комбайна ҫул уҫса пама, кĕтессене вырма, горючи турттарма, комбайнпа пухнă тырпула тасатса типĕтме — колхозниксен тата совхоз рабочийĕсен тивĕҫлĕ ушкăнне яланлăхах уйăрса ҫирĕплетмелле, вĕсене тырă тасатмалли машинăсемпе лашасем тивĕҫлĕ таран уйăрса памалла.

5. Облисполкомсене, крайисполкомсене тата союзлă республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи коммунистсен партийĕн Центральный Комитечĕсене кăҫалхи июлĕн 25-мĕшĕччен мĕнпур элеваторсенче, ялхуҫалăх продукчĕсене йышăнакан пунктсемпе складсенче ĕҫлеме тивĕҫлĕ таран работниксем пухса хатĕрлеме хушас. Элеваторсенче, ялхуҫалăх продукчĕсене йышăнакан пунктсемпе складсенче татти-сыпписĕр тырпул тата ялхуҫалăхĕн ытти продукчĕсене йышăнса тăмалла тата государство запасĕсене тĕрĕс-тĕкĕл сыхласа усрамалла тăвас пулать.

6. Колхозсенче тата совхозсен территорийĕнче пурăнакан ĕҫлеме пултаракан мĕнпур ҫынсене—колхозниксемпе вĕсен ҫемьисен членĕсене, ҫавăн пекех тата колхозник мар ытти ҫынсене те, вĕсем ĕҫлеме пултараççĕ пулсан тата промышленноҫпа транспортра ĕҫлемеççĕ пулсан, ӳссе ҫитнисене те, ҫавăн пекех 14 ҫултан иртнĕ ҫамрăксене те, тырпул пухса кĕртнĕ ҫĕрте обязательнăй йĕркепе ĕҫлемелле тăвас.

1945 ҫулхи тырпула пухса кĕнĕ вăхăтра мĕнпур ӳссе ҫитнĕ ĕҫлеме пултаракан колхозниксене тата 14 ҫултан иртнĕ ҫамрăксене пурне те, вĕсем ĕҫкунĕсен минимумне тултарнипе тултарманнине пăхмасăрах, обязательнăй йĕркепе ĕҫе тухмалла тăвас.

7. Тырпул пухса кĕрес ĕҫе ачаллă колхозниксемпе совхозсенчи ачаллă работницăсене активлăн хутшăнтарас тата тырпул пухса кĕртнĕ ҫĕрте ĕҫлекен ҫынсен ĕҫ вăхăтне перекетлес тесе, колхоз правленийĕсемпе совхоз директорĕсене тырпул пухса кĕртмелли тапхăр валли ача яслисем, ача сачĕсемпе площадкисем тума, ҫавăн пекех тата ачасене ушкăнăн-ушкăнăн пĕрлештерсе килте пăхмалла тума хушас. Ҫакăн пек пĕрлештернĕ ачасене пăхмашкăн опытлă ватăрах колхозницăсене уйăрмалла, ҫав колхозницăсене вара ĕҫшĕн колхоз шучĕпе тӳлемелле.

8. Колхозсене ҫакăн пек тума хушас: ӳссе ҫитнĕ ĕҫлеме пултаракан колхозниксем сăлтавсăрах тырпул пухса кĕртес ĕҫрен пăрăнаççĕ пулсан, вĕсем ҫине, колхоз правленийĕ йышăннă тăрăх, ялхуҫалăх артель уставĕн 17-мĕш статьинче кăтартнă пек, ĕҫкунĕсемпе штраф хумалла тăвас тата авансра тырă памалла мар тăвас.

9. Республикăсен совнаркомĕсене, крайисполкомсене, облисполкомсене тата райисполкомсене тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра ĕҫлеме колхозсемпе совхозсене ĕҫ вăйĕ мĕн чухлĕ хушса памаллине малтанах палăртса пама хушас, вара СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1944 ҫулхи июлĕн 19-мĕшĕнче «Тырпул пухса кĕртесси тата ялхуҫалăх продукчĕсем хатĕрлесси ҫинчен» йышăннă постановлени тăрăх, тырпул пухса кĕнĕ вăхăтра хуласенчи тата ялсенчи ĕҫлеме пултаракан ҫынсене ĕҫе хутшăнтарма хушас.

10. Тырпул пухса кĕртнĕ ҫĕрте ĕҫлеме мобилизаци йĕркипе явăҫтарнă ҫынсене ҫакăн пек обязательнăй заданисем памалла: колхозсенче—40—50 ĕҫкунĕ чухлĕ, совхозсенче 50—60 кунхи норма чухлĕ ĕҫлеттермелле; ҫав нормăсене тултарнă хыҫҫăн вара ĕҫе хутшăнтарнă ҫынсем хăйсен ирĕкĕпе мобилизацирен хăтăлма пултараççĕ.

11. Хулари тата ялти ĕҫлеме пултаракан ҫынсене ялхуҫалăх ĕҫне явăҫтарнăшăн тӳлес йĕркене 1945 ҫулта та улăштармасăрах хăварас; вăл ҫакăн пек пулмалла: ялхуҫалăх ĕҫне явăҫтарнă ҫынсемпе татăклă расчет тăвас вăхăт ҫитиччен колхоз правленийĕ вĕсене кашни ĕҫкунĕ пуҫне авансра пĕрер килограмм тĕштырă парса пырать; ĕҫлекенсемпе калаҫса татăлнă тăрăх, пĕр килограмм тĕштырă вырăнне 5 килограмм ҫĕрулми е ытти ялхуҫалăх продукчĕ парать.

12. СССР Суту-илӳ Халăх Комиссариатне ҫапла тума хушас: МТС-семпе совхозсене ĕҫлеме янă инженерсене, механиксене тата квалификациллĕ рабочисене ялсенче промышленноҫть рабочийĕсем валли тунă нормăсем тăрăх ҫăкăр тата ытти продуктсем парса тăмалла. Тырпул пухса кĕме янă вăхăтра вĕсен ҫемьисем пурăннă ҫĕрте те вĕсене продовольстви карточкисем парса тăмалла.

13. 1945 ҫулта ялхуҫалăх ĕҫне явăҫтарнă квалификациллĕ рабочисене вĕсем хăйсем ĕҫленĕ вырăнсенче юлашки 3 уйăх хушшинче ĕҫлесе илнĕ уйăхри вăтам ĕҫукçин 50 процентне чухлĕ тӳлемелле тăвас.

14. Пур колхозсемпе совхозсенче те тырпул пухса кĕртнĕ ҫĕрте тата государствăн хатĕрлев пункчĕсене ялхуҫалăх продукчĕсем турттарнă ҫĕрте ĕҫе уйрăм сдельщина тăрăх тата пысăк мар ушкăнсене (звеносене) уйрăмшарăн задани панă тăрăх организацилемелле. Ҫавна май колхозсенче ҫапла тума сĕнес: бригадăсенче, звеносенче алăпа тырă вырнă, кĕлте ҫыхнă, кĕлте пуҫтарса ҫĕмеле хывнă тата кĕлте турттарнă ҫĕрте, пучах пуҫтарнă ҫĕрте уйрăм ҫынсене е уйрăм ушкăнсене участоксем уйăрса парса ĕҫлеттермелле, тĕштырă тасатнă, тырă турттарнă ҫĕрте тата ытти ĕҫсенче вара—уйрăм ҫынсене тата пысăк мар ушкăнсене вĕсем тума пултарнă чухлĕ виҫепе ĕҫ уйăрса парса ĕҫлеттермелле.

15. Хăйсен ĕнисемпе ĕҫлеме килĕшекен колхозниксем, рабочисемпе служащисем валли колхозра е совхозра ҫак ĕҫсем тĕлĕшпе лашапа ĕҫлеме тунă нормăсен виҫĕ пайĕнчен пĕр пайĕ чухлĕ ĕҫ норми тума, сдельнăй ĕҫ хакне вара пĕр пекех хăварма хушас. Колхозсенче тырпул пухса кĕртнĕ ҫĕрте хăйсен ĕнисемпе ĕҫлекен колхозниксене вĕсем тунă ĕҫсемшĕн ĕҫкунĕ икĕ хут ӳстерсе памалла, совхозсенче вара тырпул пухса кĕртнĕ ҫĕрте хăйсен ĕнисемпе ĕҫлекен рабочисемпе служащисене ҫав ĕҫсенех лашапа тунăшăн тӳлемелли хакран икĕ хут ӳстерсе ĕҫукçи тӳлемелле.

Колхозниксемпе рабочисен тата служащисен ĕнисене общественнăй хуҫалăхра ĕҫленĕ мĕнпур тапхăрта ĕҫе хутшăнакан общественнăй ĕнесене тăрантарнă пекех тăрантармалла.

16. Государствăна тырă турттарса панă ҫĕрте хăйсен ĕнисемпе ĕҫлекен колхозниксене, рабочисемпе служащисене ҫакăн пек йĕркепе тӳлемелле:

а) хăйĕн ĕнипе тырă турттаракан колхознике, рабочипе служащие кашни центнер-километршăн 0,30 ĕҫкунĕ памалла;

б) ĕҫре хавхалантарас шутпа, колхозниксене аванс шучĕпе пама тата колхозăн хуҫалăх нушисене витме уйăрнă 15 процент тĕштырăран кашни центнер-километршăн 135 грамм таран тĕштырă хушса памалла; уйăхра ҫирĕплетнĕ нормăран ирттерсе турттарнăшăн вара икĕ хут ӳстерсе тырă памалла.

Совхозсенче государствăна хăйсен ĕнисемпе тырă турттарса панăшăн рабочисемпе служащисене ҫак ĕҫсене лашапа тунăшăн тӳлекен хакран икĕ хут ӳстерсе тӳлемелле, ҫавăн пекех тата, ĕҫре хавхалантарас шутпа, хăйсен ĕнисемпе тырă турттаракан колхозниксем валли ҫак пунктра тунă йĕрке тăрăх тата ҫав виçепех тĕштырă хушса памалла.

17. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра, хатĕрлев планне тултариччен, колхозниксене аванс шучĕпе пама тата колхозăн ялхуҫалăх нушисене витме тĕштырă, хĕвелҫаврăнăш, ҫĕрулмипе пахчаҫимĕҫ ҫакăн чухлĕ виçепе уйăрса хумалла тăвас: государствăн хатĕрлев пункчĕсене тĕрĕссипе панă ҫав культурăсен хисепĕнчен тĕштырă—15 процент, рис—10 процент, хĕвелҫаврăнăш—5 процент, ҫĕрулмипе пахчаҫимĕҫ—15 процент уйăрмалла.

Аванс шучĕпе пама тата колхозăн хуҫалăх нушисене витме продуктсем уйăрса хăвармалли ҫирĕплетнĕ нормăсене епле пăхăнса пынине ҫирĕппĕн контроль туса тăмалла, ҫав нормăсене кирек мĕнле ӳстерме пăхнине те чарса лартмалла, айăплисене, ҫав айăпа тырпула салатса пĕтерни вырăнне хурса, ответ тыттармалла.

Колхоз правленийĕсене аванс шучĕпе тĕштырă, хĕвелҫаврăнăшĕ, ҫĕрулмипе пахчаҫимĕҫ фондĕнчен колхозниксене ĕҫлесе тунă ĕҫкунĕ тăрăх ҫĕç парса пыма хушас.

18. МТС-сен йĕтĕн-кантăр пухмалли машинисемпе, клеверпа люцерна ҫапмалли тата шĕкĕлчемелли молотилкисемпе, йĕтĕн-кантăр тылламалли машинисемпе ĕҫлекен машинистсене ĕҫшĕн тӳлемелли йĕркене пĕлтĕрхи пекех хăварас, вĕсене ҫав ĕҫсенче вĕсемпе пĕрле ĕҫлекен трактористсене нормăсене тултарнăшăн тӳленĕ чухлĕ ĕҫкунĕсем памалла тăвас, ҫӳлте асăннă машинистсене ĕҫкунĕсем шутласа памалли тата расчетсем тумалли йĕркене, ҫавăн пекех МТС-сенчи трактористсене укҫан тата натурăпа тӳлеме тунă гарантиллĕ минимума та ҫӳлерех асăннă машинистсемшĕн те пĕр пекех тăвас.

19. Колхоз правленийĕсене колхоз туртăм вăйĕпе ĕҫлекен колхозниксене комбайн вырнă хыҫҫăн юлакан улăма пуҫтарса колхоз картишне турттарса килнĕшĕн е купаласа хунăшăн ҫав улăмăн кашни пиллĕкмĕш пайне пама ирĕк парас. Комбайн хыҫҫăн юлакан улăма хăйсен ĕнисемпе турттарса купаланă колхозниксене турттарса купана хывнă улăмăн кашни виççĕмĕш пайне пама ирĕк парас.

20. Совхозсенчи трактористсене тата МТС-сенчи куҫса ҫӳрекен участковăй механиксене комбайнпа тырă вырса пуҫтармалли плана лайăх пахалăхпа пурнăҫлама пулăшнăшăн натурăпа премии памалли 1944 ҫулта пулнă йĕркене 1945 ҫул валли те хăварас, урăхла каласан, МТС-ăн куҫса ҫӳрекен участокри механикĕсене, комбайнпа тырă вырса пуҫтармалли плана лайăх пахалăхпа пурнăҫлама пулăшнăскерсене, тырă вырса пуҫтарнă хыҫҫăн 15 кунран кая юлмасăр 10 пăт тĕштырă натурăпа премии памалла, совхозсемпе селекци станцийĕсенчи трактористсем вара, ĕҫшĕн укҫа илнисĕр пуҫне, хăйсемпе пĕрле ĕҫлекен комбайнерсем валли тунă виҫепе натурăллă премии — тĕштырă илеççĕ.

21. Вырăнти партипе совет тата ҫĕрĕç органĕсене пур колхозсенче те тырпул пухса кĕртнĕ ҫĕрте ĕҫе тĕрĕс шута илмелле тума тата тырпул мĕн чухлĕ пухнине бригадăсемпе звеносем тăрăх уйрăммăшарăн шута илмелле тума хушас. Тырпула ҫавăн пек бригадăсемпе звеносем тăрăх уйрăммăшарăн шута илни колхозниксене, МТС трактористчĕсене ялхуҫалăх культурисен тухăҫлăхне ӳстеринишĕн ĕҫшĕн хушса тӳлеме, совхозсенче пара натурăпа тӳлеме май парать.

Ҫавăн пекех тата сахăр кăшманĕн, ҫĕрмамăкĕн, ҫу тумалли культурăсен, кок-сагызăн, табакпа махоркăн тата ытти пропашной, техникăллă культурăсен тухăçне те, вĕсене акнă участоксене звеносенчи уйрăм ҫынсем пăхса ӳстернĕ тата уйрăн пухса кĕртнĕ пулсан, уйрăмăн шута илмелле. Ҫапла вара кашни колхознике хăйне ҫирĕплетсе панă участок ҫинче нормăран ирттерсе ытларах тырпул туса илнĕшĕн ĕҫшĕн хушса тӳлемелле тăвас пулать.

22. Тырпул пухса кĕртиччен тата государствăна ялхуҫалăх продукчĕсем парса татиччен колхозсенчен, совхозсемпе МТС-сенчен, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ирĕк памасăр, ĕҫ вăйĕпе чĕрĕ туртăм вăйне тата транспорт хатĕрĕсене тырпул пухса кĕртессипе тата государствăна ялхуҫалăх продукчĕсем турттарса парассипе сыхăнман кирек те мĕнле урăх ĕҫе мобилизацилеме чарас.

23. Тырпул тухăçне тĕплĕн тата тĕрĕс шута илмелле тăвас тесе, кашни районрах кăҫалхи июлĕн 30-мĕшĕччен бухгалтерсемпе счетоводсен инструкциллĕ канашлăвне пухса ирттерес. Ҫав канашлусенче колхозсенчи, бригадăсемпе звеносенчи ĕҫе мĕнле шута илмелли ҫинчен сӳтсе-явмалла.

III.

ТĔШТЫРĂСЕНЕ ТАТА ҪУ ТУМАЛЛИ КУЛЬТУРĂСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ЕНĔПЕ

1. Тырпулсене вăхăтра та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес шутпа, уборка ĕҫĕсене пĕр кая юлмасăр вăйлатса ямалла, жнейкăсемпе лобогрейкăсене, сноповязалкăсене ҫийĕнчех ĕҫе ямалла, ҫакăнпа пĕрлех тырпула ҫавасемпе те ҫулмалла, ҫурласемпе те вырмалла, комбайнсене вăхăтра ĕҫе ямалла, ҫапла вара тырпула пĕр вăхăтрах пур майсемпе те вырса пуҫтарса пымалла.

2. Тĕштырăсене 18—20 ĕç кунĕнчен кая юлмасăр вырса пуҫтармалла. Комбайн валли уйăрнă тырпул пиçсе ҫитнĕ пулсан, анчах комбайн колхоза ҫитмен пулсан е юсавлă мар пирки чарăнса тăрать пулсан, тырпула ҫăмăл машинăсемпе тата алăпа та вырма колхозсене ирĕк парас.

3. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ облаҫсемпе крайсенчи тата республикăсенчи мĕнпур советпа парти тата ҫĕрĕç органĕсене, МТС-семпе колхозсене тата совхозсене тырпула тăккаланипе хирĕç куллен кĕрешессине, тырпула уйхирте, вырнă чухне, ҫапнă чухне, турттарнă чухне тата усранă чухне ҫирĕп хураллаcа сыхлассине организацилеме хушаççĕ.

Ҫав шутпа ҫаксене туса ирттермелле:

а) тырпула машинăсемпе вырнă е ҫавапа ҫулнă хыҫҫăн ҫийĕнчех кĕлте сыхмалла, кĕлтесене пуҫтарса ҫĕмелсемпе майра-пуҫсем тумалла, ҫавăн пекех тата пучах пухассине тĕплĕн организацилемелле, ҫак ĕҫе, пысăккисемпе пĕрлех, шкул ачисене те анлăн явăҫтармалла;

б) тырă вырма пуҫланă хыҫҫăн 5 кунран кая юлмасăр авăн ҫапма тытăнмалла, авăна массăллăн ҫапассине кая хăвармалла мар. МТС-семпе колхозсен тата совхозсен мĕнпур сложнăй молотилкисене тата лашапа ĕҫлекен молотилкисене талăкĕ-талăкĕпех ĕҫлеттермелле тăвас пулать. Авăн ҫапассипе кĕлте турттарса капана хывассине пĕр вăхăтрах туса пыма колхозсенче ĕҫ вăйĕ ҫителĕксĕр пулсан, колхозсен кĕлте типсе ҫитнĕ хыҫҫăн мĕнпур вырнă тырра турттарса ҫийĕнчех капана хывмалла, ҫав ĕҫе тырă вырса пĕтернĕ хыҫҫăн 10 кунран кая хăвармасăр вĕҫлемелле;

в) колхозниксенчен тата совхозсенчи рабочисенчен вĕсем вырса пуҫтарнă участоксене обязательнăй йĕркепе тĕрĕслесе йышăнмалла тăвас пулать: колхозсенче—ҫав участоксене уйхир бригадисен бригадирĕсем, совхозсенче вара—отделенисен управляющийĕсем кашни кунах йышăнса тăраççĕ, колхоз председателĕ е совхоз директорĕ — 5 кунта пĕрре йышăнать. Ĕҫе тĕрĕслесе йышăннă чухне тырпула мĕнле пахалăхпа вырса пуҫтарни ҫине уйрăмах тимлĕн ҫаврăнса пăхмалла, уйра пучах пăрахса хăвармалла мар, палăрнă ҫитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ҫийĕнчех мерăсем йышăнмалла;

г) комбайнер тырра ҫӳлтен кастарса вырнипе тата комбайна начар йĕркеленипе тырпула тăккалать пулсан, ҫав начар вырса пуҫтарнă участокшăн комбайнера ĕҫшĕн 30 процент чухлĕ чакарса тӳлеме МТС-семпе совхозсен директорĕсене ирĕк парас;

д) комбайнсемпе молотилкăсем ҫапса кăларнă мĕнпур нӳрĕ тырра ҫийĕнчех итемсенче тата сушилкăсенче типĕтессине организацилемелле, ҫапнă тĕштырра тасататтассине авăн ҫапассинчен кая хăвармалла мар, ҫавăн пекех тырпула кунасенче те хĕрсе кайма памалла мар;

е) уйхирте ларакан, вырса хунă тата ҫĕмелсемпе капана хывнă тырпула, ҫавăн пекех итемсем ҫинчи тырпула тĕплĕн хураллас ĕҫе организацилемелле;

ж) пухса илнĕ тырпула мĕнпур ĕҫсен тапхăрĕнче ҫирĕп шута илсе пымалла тăвас пулать. Тырра молотилкăсемпе комбайнсем патĕнче тата ăна амбарсене йышăннă чухне обязательнăй йĕркепе виçмелле. Тырра итемсенчен амбарсене тата хатĕрлев пункчĕсене леçнĕ чухне тырă турттаракан ҫыннăн хушаматне, вăл мĕн чухлĕ тырă тиенине, тырă мĕнле сортлă пулнине тĕрĕс кăтартса ҫырнă накладнойсемпе ăсатмалла.

4. Райисполкомсен председателĕсене, парти райкомĕсен секретарĕсене тырпула уйхирте, итемсем ҫинче, ҫапнă тата турттарнă чухне тĕрĕс сыхласа усранине тата тĕрĕс шута илнине контроллесе тăма хушас. Тырă виçекенсене, кладовщиксене, хуралҫăсене, объездчиксене тата тырă турттарас тĕлĕшпе ĕҫлекен старши обознăйсене суйласа илмелле.

5. Ҫу тумалли культурăсем, уйрăмах хăвăрт тăкăнакан культурăсем (горчица, рыжик, клещевина, перилла, кунжут) пулса ҫитнине тĕплĕн сăнаса тăрассине тата вĕсене пухса кĕртессине тимлĕн организацилемелле, техникăллă ҫав паха культурăсене ларнă ҫĕртех тăкăнса кайма памалла мар.

6. Колхозсемпе совхозсенче ҫу тумалли культурăсене чи кĕске срокcенче пухса кĕртмелле: хĕвелҫаврăнăшне кашни колхозпа совхозрах 8—10 ĕç кунĕнчен кая хăвармасăр пухса илмелле, клещевинăн сапакисене малтанхи хут касассине икĕ кун хушшинче туса ирттермелле, сойăпа кĕтра йĕтĕне 5—6 кун хушшинче, горчицăна, рыжика, периллăна, ляллеманацине 3—4 кун хушшинче пухса кĕртмелле.

7. Кая юлса пулакан культурăсене (клещевинăна, сойăна, арахиса тата хĕвелҫаврăнăшне) типĕтме ятарласа тунă сушилкăсене тата ҫуртйĕрсене кăҫалхи августăн 1-мĕшĕччен хатĕрлесе ҫитермелле, ҫĕнĕ сушилкăсем тума кирлĕ таран строительство материалĕсем уйăрмалла, ҫав культурăсене шĕкĕлчесе типĕтессине вăхăтра организацилемелле.

(Юлашки пулать).

США сенатĕн ют ҫĕршыв ĕҫĕсен комиссийĕ Пĕрлешнĕ нацисен уставне ырланă

ВАШИНГТОН, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Сенатăн ют ҫĕршыв ĕҫĕсен комиссийĕ 5 кун хушши пынă пренисем хыççăн сената Пĕрлешнĕ нацисен уставне, Сан-Франциско хулинчи конференцире йышăннăскере, ҫирĕплетме сĕнме йышăннă. Комисси председателĕ Коннэли сенатор каланă тăрăх, ҫак решение комиссин вăрттăн ларăвĕ пулса иртнĕ хыççăн йышăннă. Сасăлании результачĕсем ҫинчен сената комисси официальнăй йĕркепе июлĕн 16-мĕшĕнче пĕлтерет. Сенатра июлĕн 23-мĕшĕнче устав пирки пренисем пуҫламалла. Коннэли шутланă тăрăх, устава ҫирĕплетес умĕн 10 кун хушши пренисем пымалла.

СУДЕТ ОБЛАҪĔНЧЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕН «ВЕРВОЛЬФ» ЯТЛĂ ТЕРРОРЛА ОРГАНИЗАЦИНЕ ТУПНĂ

ПРАГА, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Хаҫатсем пĕлтернĕ тăрăх, Чехословакин кăрушсăрлăх органĕсем Судет облаҫĕн территорийĕнче нацистсен «Вервольф» ятлă террорла организацин йĕрне тупнă. «Вервольф» членĕсен уйрăм ушкăнĕсем саботаж тума тата террорла ĕҫсем тума хăтланнă. Вĕсем Чехословакире ҫеç мар, Европăри ытти государствăсенче те общественнăллă деятельсене вĕлерме хатĕрленнĕ. Броумов хули районĕнче хĕҫпăшалпа апат-ҫимĕҫĕн пысăк склачĕсене тупнă, вĕсене тĕплĕ туса хатĕрленĕ системăпа валеҫсе тăнă. 22-шер член шутланакан ушкăнсене, автоматлă ҫăмăл тата йывăр хĕҫпăшалпа хĕҫпăшалланнăскерсене, ҫар ĕҫне гитлерла офицерсем вĕрентнĕ. Вăл ушкăнсен опорнăй пункчĕсем тата связистсем пулнă. Уйăрса илнĕ нацистсене Германие, Рейнерца янă, унта вĕсем, офицерсем ертсе пынипе, сиктерсе ямалли япаласемпе усă курма тата ҫар техникине вĕреннĕ. Вĕренсе тухнă хыççăн вĕсем чикĕ ҫывăхĕнчи облаҫа таврăннă, кирлĕ вăхăтра ĕҫлеме хатĕр пулса тăнă.

Прагăри хаҫатсем ҫапла ҫыраççĕ: тĕнчери пĕрремĕш вăрçă хыççăн пулнă лару-тăру тепĕр хут таврăнмалла мар. Ун чухне перемири хыççăн ҫийĕнчех «хура корпуссем» тата нимĕҫ офицерĕсемпе генералĕсем ертсе пыракан хĕҫпăшаллă вăйсем ҫĕнĕ вăрçă хатĕрлеме пуҫларĕç. Халĕ нимĕҫ милитаризмĕпе империализмне тымарĕпех кăкласа пăрахмалла, нимĕҫсене, яланах вăрçă хăрушлăхĕ ҫинчен асилтерсе тăракансене, Чехословакирен хăваласа кăлармалла. Чехословаки территорийĕнче нимĕҫсен «Вервольф» пек организацине тупни Чехословакире пурăнакан нимĕҫсем вĕсене ҫĕршывран хăваласа кăларичченех сиенлĕ ĕҫсем тума пăрахманнине пĕлтерет.

АНГЛИ ОБОЗРЕВАТЕЛĔ ГРЕЦИРЕ МОНАРХИЛЛĔ ПЕРЕВОРОТ ХАТĔРЛЕНИ ҪИНЧЕН

ЛОНДОН, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли геральд» хаҫат курăнмалли вырăнта хăйĕн дипломатиллĕ обозревателĕн Юэрăн статьине пичетлесе кăларнă. Статьяра каланă тăрăх, Грецири монархистсем переворот тума хатĕрленеççĕ. Юэр каланă тăрăх, лару-тăру хăрушланса пырать. Короле таврас ыйтупа плебисцит туса ирттернĕ вăхăтра поражени тӳсес пулсан, монархистсем влаҫа тытса илме хатĕрленеççĕ. Плебисцит вĕсене килĕшӳллĕ пулсан, вĕсем диктатура туса хума хатĕрленеççĕ. Монархист-офицерсем гвардире тата жандармерире паллă вырăнсене йышăнса тăраççĕ. Монархистсем штурмовой отрядсем евĕрлĕ организацисем тăваççĕ. Правительство уҫҫăнах туса пыракан ҫав ĕҫсене хирĕç нимĕн те тумасть.

ТРИЕСТРА ФАШИЗМА ХИРĔҪ КĔРЕШЕКЕНСЕНЕ АРЕСТЛЕНИ

БЕЛГРАД, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Любляны хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 10-мĕшĕнче акăлчансен ҫар полицийĕ фашизма хирĕç кĕрешекен паллă деятелĕ, Триест хулин ирĕклĕх скупщинин председательне Джузеппе Погассие, Триест хулин коменданчĕ пулса ĕҫленĕ ҫынна — Югослави ҫарĕн майорне Якшетича тата унăн арăмне, Югослави хаҫачĕсен икĕ корреспондентне, Триестри пожарниксен профсоюз комитечĕн членĕсене тата ыттисене те арестлесе Триест тĕрмине хупнă. Арестленисене кăларма ыйтса тата арестленине хирĕç протестлесе, союзниксен ҫар влаҫĕсем патне кун каçиччченех учрежденисенчен, фабрикăсемпе заводсенчен делегацисем пыра-пыра кайнă.

ПОЛЯК ЭМИГРАНЧĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ БЕРУТ ПАТĔНЧЕ

ВАРШАВА, июлĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Польпресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут поляк эмигранчĕсен делегацине йышăннă. Делегаци Президента каласа панă тăрăх, ялхуҫалăх рабочийĕсен Францире пурăнакан 50.000 ҫемьи халех тăван ҫĕршыва таврăнма хатĕр.

А. К. КЕРР ВАРШАВА ХУЛИНЕ ПЫНĂ

ВАРШАВА, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут чĕннипе Великобританин Совет Союзĕнчи Посолĕ Арчибальд Кларк Керр июлĕн 12-мĕшĕнче Варшавăна ҫитнĕ. Варшавăри аэродромра Керра президентăн представителĕ, ют ҫĕршывсен Польша правительстви ҫумĕнчи представителĕсем, ҫавăн пекех тата ют ҫĕршыв ĕҫĕсен министерствин представителĕсем хирĕҫ тухса кĕтсе илнĕ.

А. ЖДАНОВ ГЕНЕРАЛ-ПОЛКОВНИК ХЕЛЬСИНКИ ХУЛИНЕ ПЫНĂ

ХЕЛЬСИНКИ, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Финляндири Контроль Комиссийĕн Председателĕ А. А. Жданов генерал-полковник июлĕн 14-мĕшĕнче Хельсинки хулине пынă.

ФРАНЦИРЕ ФРАНКОПА ҪЫХĂНУ ТЫТМА ПĂРАХМА ЫЙТАҪҪĔ

ПАРИЖ, июлĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Франципе Испани» ятлă ассоциаци ертсе пыракансем ҫак кунсенче Парижра лару туса ирттернĕ. Ларура резолюци йышăннă. Ҫав резолюцире вĕсем Франци правительствинчен Франкопа дипломатиллĕ ҫыхăну тытма пăрахма ыйтнă. Республикăллă Испани правительствине йышăнмалла та Пĕрлешнĕ нацисен ытти правительствисене те ҫавăн пек тума сĕнмелле, тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти суту-илӳпе кооперации техникумĕ 1-мĕш курса вĕренме илесси ҫинчен пĕлтерет

Ҫак отделенисене вĕренме илеççĕ: 1) бухгалтер отделенине, 2) план отделенине, 3) общественăллă апатлану отделенине.

Техникумра 3 ҫул вĕренмелле.

Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа сентябрĕн 10-мĕшĕччен илеççĕ.

Техникума вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Вĕренме илмелли экзаменсем сентябрĕн 11-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче ҫак предметсемпе пулса иртеççĕ: Совет Конституцийĕпе (сăмахпа калаттарса), вырăс чĕлхипе (сăмахпа калаттарса тата ҫыртарса), математикăпа (сăмахпа калаттарса тата ҫыртарса).

Отличниксене экзаменсăрах илеççĕ.

Техникумра октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Заявленипе пĕрле ҫак документсене (копийĕсене мар) ямалла: 1) ăçта миçе ҫул вĕреннине кăтартакан свидетельство, 2) хăçан ҫуралнине кăтартакан свидетельство, 3) сывлăх ҫинчен калакан справка, 4) автобиографи, 5) виçĕ сăн ӳкерчĕкĕ, 6) Хĕрлĕ Ҫар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка (ăна ҫара каймаллисен ямалла).

Студентсене пурне те стипенди параççĕ, рабочисен нормипе апат-ҫимĕç параççĕ, выртса тăмалли вырăн параççĕ, общежитие вырнаҫтараççĕ.

Адрес: гор. Чебоксары, Ленинградская, 3.

Чăвашпромстрахкассăна шут ĕçне пĕлекен ҫын кирлĕ, ăна кайран Мускава 3 уйăх вĕренмелли бухгалтер курсне яраççĕ.

Ҫак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 51, Чувашпромстрахкасса.

Чăвашсен ялхуҫалăх институчĕ агрономипе зоотехника факультечĕсен 1-мĕш курсне вĕренме илесси ҫинчен пĕлтерет.

Институт районри, облаҫри тата республикăри ҫĕрĕç органĕсенче, ҫавăн пекех тата опыт станцийĕсенче, наукăпа тĕпчев институчĕсенче ĕҫлеме пысăк квалификациллĕ агрономсемпе зоотехниксем вĕрентсе хатĕрлет.

Институтра 4 ҫул вĕренмелле.

Института 17 ҫултан пуçласа 35 ҫула ҫитнĕ ҫынсене, вăтам шкултан вĕренсе тухнисене, ҫак предметсемпе экзамен лайăх панисене илеççĕ: вырăс чĕлхипе тата литературăпа (сăмахпа каласа тата ҫырса), физикăпа тата химипе. 1944 ҫулта вăтам шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене тата 1945 ҫулта вăтам шкултан вĕренсе тухнă чух ылтăн тата кĕмĕл медаль илнисене института экзаменсĕрех илеççĕ.

Ялхуҫалăх техникумĕсемпе зоотехника техникумĕсенчен пур предметсемпе те отлично вĕренсе тухнисене те экзаменсăрах илеççĕ.

Заявленисене институт директорĕ ячĕпе ҫак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, ул. Волгостроя, 4, Сельхозинститут.

Заявленипе пĕрле ҫак документсене ямалла: 1) автобиографи, 2) ăçта миçе ҫул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствăна хăйне, копине мар), 3) виçĕ сăн ӳкерчĕкĕ, 4) Хĕрлĕ Ҫар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка (ăна ҫара каймаллисен ямалла).

Заявленисене сентябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Института вĕренме илмелли экзаменсем сентябрĕн 1-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Институтра октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Дирекци.

3—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуҫалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00165 Типографи №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000